4176 VI-248

ИЛЛЕ ТУКТАШ



# КĔСКЕ КАЛАВСЕМ

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ — 1941

ИЛЛЕ ТУКТАШ

Чăваш кĕнеке
палатине — автортан.
Илья Тукташ.

# КĔСКЕ КАЛАВСЕМ

1948 ç.
октябрь 11.

Укерчĕкĕсене *Г. Харлампьев* тунă


...ТАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР



ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1941

*ШКУЛ ÇУЛНЕ ÇИТМЕН АЧАСЕМ ВАЛЛИ*

# ЧӖРӖП ЧӖППИ ХӐНАРАН ТАВӐРӐННИ*

Пӗчӗк чӗрӗп чӗппи куккӑшӗсем патне хӑнана кайнӑ. Куккӑшӗсем ӑна пӗр пӗчӗк хутаҫпа кучченеҫсем парса янӑ. Киле килнӗ чух ҫурма-ҫула ҫитсен, сасартӑк шарлаттарса ҫумӑр ҫума пуҫланӑ. Чӗрӗп чӗппи хутаҫне пӗчӗк тӗмеске ҫине хунӑ та хӑй ват юман кутне канма ларнӑ. Ҫывӑрах кайнӑ вӑл ҫак юман хӳтлӗхӗнче.

Нумай ҫывӑрать-и чӗрӗп чӗппи, сахал ҫывӑрать-и, вӑрансан пӑхать,—кучченеҫ хутаҫҫи таҫта ҫухалнӑ. Тытӑнать шырама. Шырать-шырать, ниҫта та тупаймасть. Вара куккӑш кучченеҫӗсӗрех килне йӗрсе таврӑнать.

— Ма йӗретӗн, ывӑлӑм?—тесе ыйтать кунтан амӑшӗ.

— Кукка кучченеҫне ҫухатрӑм,—тет ку, сӑмсине нӗшлеттерсе.

* Ку калавсене Радлов художникӑн Мускавра 1937 ҫулта пичетленсе тухнӑ картинӗсем тӑрӑх ҫырнӑ.



— Ăçтарах хурсаттăн ара?—ыйтать амăшĕ.

— Юман кутĕнчи тĕмеске çине хутăм та, çывăрса кайрăм. Вара такам вăрласа кайнă,—тет ку.

Чĕрĕп чĕппипе амăшĕ кучченеçе шырама тухса кайрĕç. Çитрĕç хай юман кутне. Пăхать чĕрĕп амăшĕ—хăй ывăлĕн хутаççи пĕр пысăк кăмпа тăрринче вырта парать.

— Ех айван,—тет вăл ачине,—тĕмеске çине мар, кăмпа çине хунă вĕт эс хутаçна,—тет.

— Çук, пĕчĕкçĕ тĕмеске çине хутăм,—таварать ку амăшне хирĕç.

— Вăл тĕмеске мар, кăмпа пулнă. Эс çывăрнă хушăра çумăрпа ӳсе кайнă,—ăнлантарса пачĕ амăшĕ.

Чĕрĕп чĕппипе амăшĕ кучченеç хутаççине кăмпа çинчен илчĕç те, савăнăçлăн киле таварăнчĕç.

## ИКĔ ШАПА ИННЕКЕ ЛЕКНИ

Икĕ пĕчĕкçĕ шапа кӳлĕ тĕпĕнче выляса çӳреççĕ. Вылясан-вылясан, хăйсем çумĕнчех икĕ пысăк йывăç ӳснине курах каяççĕ.

— Тавай çак икĕ йывăç хушшине вĕренпа чуччу çакса ярăнар,—тет пĕри.

— Тавай,—тет тепри.

Кăсем çавăнтах таçтан пĕр вĕрен тупса килсе чуччу çакрĕç те, иккĕш юнашар ларса ярăнма та пуçларĕç. Эх ярăнаççĕ, эх ярăнаççĕ!

Анчах та йывăççисем йывăç пулман мĕн, чĕпписем валли пулă тытма пынă чарлан урисем пулнă мĕн. Чарланĕ ку вăхăтра пулă тухасса сыхласа тăнă мĕн.

Нумай та вăхăт иртмест, кап! ярса илет чарлан шыв çине сиксе тухнă пĕр пĕчĕк пулла. Ярса илет те вĕçсе улăхса кая парать. Хăйпеле пĕрле икĕ пĕчĕк шапана та çĕклесе каять вăл. Шаписем пĕлĕт çине улăхса çитсен тин тавçăрса илеççĕ епле инкеке лекинине.



— Пĕтрĕмĕр вĕт,—тет пĕри.

— Пĕтрĕмĕр,—тет тепри.

— Атя çĕре сикер,—тет пĕри.

— Хăрушă,—тет тепри.

— Апла пулсан эс кунтах лар, эпĕ сикетĕп,—терĕ те аслăрах шапи пĕррех ярăнчĕ аялалла. Лач! туса ӳкрĕ вăл пĕр чул хысакĕ çине; пырса ӳкрĕте, епле ӳкнĕ çаплипех лапчăнса ларчĕ. Тепĕр шапине чарлан чĕпписем татса хыпса çăтса ячĕç.

Çапла вара, икĕ айван шапа хăйсен пуçĕсене хăйсемех пĕтерчĕç.

## ЧĂПАР ЧĂХПА УНĂН ЧĔППИСЕМ

— Кăлăк-к... кăлăк-к... кăлăк-кăлăк!..— тесе çӳрет чăпар чăх килхушшинче.

— Шип-шип-шип... Шип-шип-шип!..— туса утаççĕ ун хыçĕнчен чĕпписем.

Чăпар чăхă навус купи тĕлне çитрĕ те, чĕпписем валли хурт-кăпшанкă тупас тесе, чаваланмах пуçларĕ. Сирпĕтет те сирпĕтет урисемпе навуса. Çапла чаваланса шăлт вараланса пĕтрĕ.

Пăхаççĕ пĕчĕкçĕ чĕпписем — хăйсен амăшне хăйсем тепаллаймаççĕ.

— Шип-шип, шип-шип, ăçта кайрĕ пирĕн анне, ăçта кайрĕ пирĕн анне?—хăраса ӳкрĕ чи пĕчĕк чĕппи.

— Шип-шип, ак кунта, шип-шип, ак кунта!—тет пысăкраххи, килхушши варринче выртакан тимĕр кăмака трупи ăшне кĕрсе кайса. Кун хыççăн пур чĕпĕсем те амăшне шыраса хăрăмлă трупа ăшне пыра-пыра кĕреççĕ. Пĕр пуçĕнчен сапсар

пырса кĕреççĕ те тепĕр пуçĕнчен хуп-
хура пулса тухаççĕ.

Чăпар чăх навус ăшĕнчен пĕр ăман чаваласа кăларчĕ. Чĕпписене йыхăрма пуçларĕ.

— Кăтăк-кăтик, чĕппĕмсем! Кăтăк-кăтик, чĕппĕмсем!—тесе йыхăрать.



Чĕпписем чупса çитеççĕ, анчах амăшĕ хăй чĕпписене хăй паллаймасть.

— Ăçта çухалчĕç ман чĕппĕмсем?—тесе тĕлĕнет.

Çак самантра шарлаттарса çумăр çуса ячĕ те, чăпар чăхăн чĕпписем каллех сар ука пек пулса тăчĕç. Чăпар чăх вĕсене ăманне таткаласа çитерсе, хăйĕн çунаттисем айне пухса лартрĕ.

## ЧАРУСĂР КУШАК ÇУРИ

Пӳрт хыçĕнче, шăп чӳрече тĕлĕнче анчăк çури çывăрса выртнă. Чӳрече витĕр тулалла кушак çури пăхса ларнă. Сасартăк кушак çури анчăк çурине курах каять.

— Чим-ха, хăратам-ха эп ку анчăка. Ак çак чечек чӳлмекне тĕртсе ярам та тӳрех пуçĕ çине лектерем,—тесе шутлать чарусăр кушак çури. Унтан аллисемпе вăрахăн чӳречене уçать те, чечек чӳлмекне тĕртет-ярать.

Кĕрĕс! туса ӳкет чӳлмек чӳрече умĕнчи пукан çумне сĕвентерсе хунă кĕрепле шăлĕ çине.

Шап! туса çавăрăнса тивет кĕрепле аври кушак çурине хăйнех çамкинчен.

Шартах сиксе вăранса каять анчăк çури ыйăхран. Пăхать—чарусăр кушак çури ик аллипе те сăмсине хыпашласа кăна ларать.



— Çапла çав, çапма пĕлмен пушă хăвнах çавăрăнса тивет вăл,—тет кăна анчăк çури мăшкăласа.

Çакăнтан пуçласа кушак çури пачах ашкăнмашкăн пăрахнă.

# МĂТЬĂК ХĂЛХАЛЛĂ ЧĂПАР ЧĂХПАЛА УЛА КУШАК

Пĕр ула кушак виçĕ çурипеле пÿрт хыçĕнче хĕртĕнсе выртнă. Ун çывăхĕнче мăтьăк хăлхаллă чăпар чăх хăйĕн чĕппи-сене ăмансем пухса çитерсе çÿренĕ. Ула кушакăн хăйĕн пĕчĕкçĕ çурисене чĕпĕ тытма вĕрентесси килнĕ. Вăл вăрахăн-вăрахăн ури çине тăнă та, çурăм çинчи тĕкне шăртлантарса, çĕр çумне лăпчăнса ларнă. Хÿрине турчăка пек кукăртса хунă вăл, кăвар пек куçĕсене йăлкăштарса, çу-рисем çине пăха-пăха илнĕ. Анчах çÿри-сем амăшĕн шухăшне нимĕн те ăнланайман: вĕсем малтанхи пекех пĕчĕкçĕ урисемпеле пĕрне-пĕри тăрмаласа мăрăлтатса выртнă. Вара ула кушак хăй пĕчченех мыскара тума шут тытнă. Чăпар чăх чĕп-писем патне йăпшăнса-йăпшăнса пынă та вăл, çивĕч чĕрнисене тем тăрăшшĕ кăларса ярса, пĕр чĕппи çине вашт! сиксе ÿкнĕ.

Шип-шип-шип!.. туса çухăрса янă çара



пĕсехеллĕ чăх чĕппи, пĕчĕкçĕ çекĕл пек çуначĕсене мĕскĕнĕн лапăстаттарса.

Пăхать мăтьăк хăлхаллă чăпар чăхă—унăн пĕр чĕппине ула кушак хăйĕн карма çăварне тĕркелесе те чикнĕ иккен. Чăпар чăх çавăнтах чĕрĕп евĕр шăртланса кайрĕ те, лупас пек çунаттисене сарса ярса, тӳрех ула кушак патне лăпăстатса чупса çитрĕ. Чупса çитрĕ те кач! тутарчĕ кукăр сăмсипеле ула кушак çамкинчен. Вут-хĕм сирпĕнсе тухса кайрĕ ула кушакăн икĕ куçĕнчен.

— Мя-у-у! Мя-у-у! Мя-у-у!—тесе кăшкăрса ячĕ куштан ула кушак, ыратнипе ниçта кайса кĕреймесĕр. Унтан çăварĕнчен чăх чĕппине кăларса пăрахрĕ те, хăй çурисене ертсе, пусма айне тарса пытанчĕ.

# АТӐПА КАЛУШ ҪӖРӖК ҪӐПАТАНА ПЫТАРНИ

Лӑп-лап, лӑп-лап, тутарса утса пырать ҫӗрӗк ҫӑпата тусанлӑ ҫулпала. Хӑй шӑлт ҫӗтӗлсе пӗтнӗ, сӳсленсе кайнӑ хӳрине аран-аран анчах сӗтӗркелет.

Кӑна хирӗҫ сӑран атӑпала вӗрҫӗнӗ калуш килеҫҫӗ.

— Ӑҫта каян, ҫӑпата тус?

— Ох, тӑванӑмсем, ан та ыйтӑр-ха: хуҫам килтен хӑваласа кӑларчӗ,—тет кӑсене хирӗҫ ҫӗрӗк ҫӑпата, хӑшти-хашти сывласа.

— Мӗн пирки капла айӑпа кӗтӗн тата?— ӑнланаймасӑр ыйтаҫҫӗ лешсем.

— Айӑпӑм нимӗн те ҫук манӑн. Эп ун патӗнче мӗн ҫуралнӑранпах тарҫӑра пурӑнатӑп. Сивӗ кунсенче сивӗрен сыхларӑм унӑн урисене, йӗпе кунсенче—йӗперен упрарӑм, шӑрӑх кунсенче—шӑрӑхран хӳтӗлерӗм. Халӗ ак колхоза кӗчӗ те мана, ватӑскерне, пахча хыҫӗнчи ҫырана ҫеҫ кайса ывӑтрӗ... Эх-ха-хай.

— Халĕ ăçта кайса вырнаçма шутлатăн вара?

— Хам та пĕлместĕп ăçта каяссине, тăванăмсем. Аптăранă енне, пĕр-пĕр хулана çитсе, мĕнле те пулин утил-сырйо магазинне сторăжа кĕрсе пулми, тесе шутлатăп. Унта манран япăхрах упăр-тапăрсене те илессĕ тенине илтнĕччĕ эпĕ...

— Э-э, çук, юлташ, унта сан пеккисем сине çавăрăнса та пăхмаççĕ,—пўлчĕ ăна сăран атă.

— Унта мĕнле те пулин ĕçе юрăхлă япаласене анчах илеççĕ,—ăнлантарма пуçларĕ çутă калуш.

— А эсĕ мĕнле ĕçе юрăхлă? Вилмелли кăна юлнă санăн!

— Апла пулсан, ăçта кайса кĕрес-ха ĕнтĕ манăн, тăванăмсем? Калăр хуть эсир те пулин тархасшăн...—тилмĕрет мĕскĕн сасăпа çĕрĕк çăпата, пĕркеленчĕк пичĕ тăрăх юхса анакан пăтранчăк куççулĕсене шăла-шăла илсе.

Атăпа калуш, пĕр-пĕрин куçĕсенчен пăхса илчĕç те, ăна çапла каларĕç:

— Акă мĕн, юлташ, çĕрĕк çăпата. Санăн татах та пурăнассу килет пулсан, кай лучче пĕр-пĕр музея. Унта сана, тен, йышăнĕç.



Чувашская книжная палата ... Чувашской АССР

— Ну, тавтапуç сире, ырă кăмăллă тăванăмсем. Пирĕн хамăрăн ялтах колхоз музейĕ пурчĕ-ха. Кайса пăхам-ха эппин çавăнта. Эсир хăвăр та унталлах çул тытмастăр-и?

— Çу-ук, Эпир пуян та культурăллă пурăнакан колхозниксем патне ĕçе кĕме каятпăр,—тавăрчĕ мăн кăмăллă çутă калуш.

Ку сăмаха илтнĕ хыççăн çĕрĕк çăпата вартах калла çавăрăнчĕ те, атăпала калуш хыççăн лăкăштатса утма пуçларĕ. „Тен, эпĕ те вĕсемпеле пĕрлех ĕçе вырнаçăп“, тесе шутларĕ вăл хăй ăшĕнче.

Кайсан-кайсан кăсен пĕр пĕчĕк лачака урлă каçмалла пулчĕ. Яшт ярса пусрĕ вăраммăн сăран атă. Ярса пусрĕ те, лачакан тепĕр енне кайса та тăчĕ.

Пĕррех сикрĕ çутă калуш çăмăллăн. Сикрĕ те, вăл та лачакан тепĕр енне каçса тăчĕ.

Тăкăлт сикме пикенчĕ çĕрĕк çăпата та. Пикенесси пикенчĕ, анчах тӳрех лачака варрине шаплатса ӳкрĕ. Ӳкнĕ-ӳкменех вăл лачака тĕпне путса анса кайрĕ.

Атăпала калуш, ку çĕрĕк çăпата çул çинче выртма та тивĕçлĕ мар тесе, ăна лачакаран туртса кăларчĕç те навус купи айне пытарса хучĕç. Хăйсем çав кунах

пуян та культурӑллӑ пурӑнакан колхозник патне пырса вырнаҫрӗҫ.

Ҫапла пӗтрӗ хевтесӗр ҫӗрӗкҫӑпата пурӑнӑҫӗ. Тепӗр эрнерен унӑн вилтӑпри ҫине пысӑк шурӑ кӑмпа шӑтса тухрӗ.



## ЦЕРБЕР

Петюкӑн пушмак пӑру пысӑкӗш хура йытӑ пур. Цербер тесе чӗнет вӑл ӑна.

— Хом-хом-хом! Хом-хом-хом!—туса янтратса вӗрет Цербер каҫсерен колхоз кӗлечӗсем умӗнче, кашни чӑштӑр-чаштӑр сасса илтсенех.

— Ай-яй, Петюк, санӑн Цербер хаяр та иккен,—теҫҫӗ ӑна хӑйпе тантӑш ачасем.

— Сут хӑвӑн Церберна,—тесе ӑмсанса ыйтаҫҫӗ таврари сунарҫӑсем Петюк ашшӗнчен. Ҫук. Петюксем никама та сутмаҫҫӗ Цербера, мӗншӗн тесен вӑл вӗсене хурала кайма кирлӗ, колхоз кӗлечӗсене хураллама.

Кӗҫӗр Петюк ашшӗ килте ҫук, ҫӗр выртмаллах станцӑна тухса кайнӑ. Тухса каяс умӗн хӑйӗн аслӑ ывӑлне, вунсакӑр ҫулхи Ваҫҫука хушса хӑварчӗ вӑл колхоз кӗлечӗсем патӗнче хурал тӑма. Анчах Петюкӑн хӑйӗн каясси килет хурала.

— Ҫук ывӑлӑм, эсӗ пӗчӗкҫӗ-ха. Халех



каяймăн, ӳссе çитсен пит маттур хуралçă пулăн,—тет ăна амăшĕ.

— Аçта сана хурала кайма. Халĕ эсĕ пăшал та йăтаймастăн вĕт,—тесе кулать унтан пиччĕшĕ Ваççук.

Анчах Петюка сăмахпах ӳкĕте кĕртеймĕн. Вăл хăйĕннех перет: „Каятăп та каятăп", тет, йĕрсе ярас пек сасăпа.

Нимĕн те тума çук, килĕшесех пулчĕ амăшин Петюкпала.

— Ну юрĕ-çке, юрĕ, ан нĕшкесе тăр. Пиччӳпе иксĕр кайăр,—терĕ вăл Петюка хăтăрса илсе.

— Эп хам пĕчченех каятăп,—тет Петюк харсăрланса.—Пичче мана ăсатса кăна ятăр,—тет.

Ваççук амăшĕ çине чее кăна пăхса куçне хĕсрĕ те, Петюка ăсатса яма килĕшрĕ. Петюк çурăм çине хăйĕн вылямалли пăшалне çакрĕ, Цербера сăнчăртан вĕçертсе çавăтрĕ. Унтан вĕсем виççĕшĕ те колхоз кĕлечĕсем патне утрĕç.

Каç пулчĕ. Пĕтĕм тĕнчене хуп-хура явлăк карса илчĕ.

— Ну, матур хуралçă, сыхă пул. Колхоз пурлăхне лайăх хуралла,—терĕ Петюка пиччĕшĕ.

— Яланах хатĕр!—ответлерĕ Петюк.

Васçук хăйĕн шăллĕне колхоз кĕлечĕ умне вырнаçтарса тăратрĕ те, хăй тепĕр кĕтесселле кайса вăрттăн пытанса тăчĕ.

Каçĕ хуралнă çемĕн хуралса килет, çилĕ вăйланнă çемĕн вăйланма тытăнчĕ. Пăртакçах ларкаланă хыççăн Петюка кичем те хăруш пулма пуçларĕ. Çитменнине ыйхă аптратса çитерчĕ тата.

— Цербер, эсĕ ан çывăр, эпĕ кăштах тĕлĕрсе илем,—терĕ вăл, пуçне кĕлет алăкĕ çине тайăнтарса. Хăй çавăнтах, сисмен хутранах, çывăрса та кайрĕ. Пĕр Цербер кăна çывăрмасть, хăлхисене чанк тăратса унăн-кунăн пăхкаласа ларать.

Нумай пулчĕ-и, сахал пулчĕ-и,—аякри кĕлет хыçĕнче темĕнле ют ура сассисем илтĕнсе кайрĕç. Унччен те пулмарĕ—пĕр кĕлечĕн алăкĕ умнелле икĕ хура мĕлке мĕлтлетсе иртрĕç. Цербер хăлхисене чанк тăратрĕ те, ют сынсем çине халь-халь сиксе ларма хатĕрленсе, çĕр çумне лăпчăнчĕ. Анчах та ăна кĕлет хыçне пытанса тăнă Васçук пӳрнепеле юнаса шăппăн паллă пачĕ:

— Цербер, цыц...

Икĕ мĕлкерен пĕри кĕлетсем умĕпе йăпшăнса иртрĕ. Пытанса тăракан Васçука асăрхаймарĕ те вăл. Петюк харлат-

тарсах ҫыварнине курсан, Цербере темӗн ыватса пачӗ те, хай юлташӗ патне йапартатса чупса кайрӗ. Анчах Цербер хайне ыватса пана татака шаршласа та пахмарӗ, ют мӗлкесене хирӗҫ те пӗр саса та памарӗ. Саса каларма хушман-ҫке-ха ана!

Кӗҫех хай палламан этемсем кӗлет алакне темӗнле тимӗр япалапа хирсе кӗмсӗртеттерме тытанчӗҫ. Ваҫҫук Цербера ҫаватса вӗсем патне йапшанса тухрӗ. Унтан пашалне тӳрех вара-хурахсем ҫине тӗллесе:

— Стой! Руки вверх!—тесе кашкарса ячӗ.

Икӗ мӗлке икӗ ҫӗрелле сиксе ӳкрӗҫ. Пӗр мӗлки хай умӗнчех Ваҫҫук танине курчӗ те, пӗррех ҫӗклерӗ аллинчи йывар ломне унан пуҫӗ ҫинелле. Анчах та сулса яма ӗлкӗреймерӗ: ана ҫавантах Цербер хыҫалтан туртса ӳкерсе айан-ҫийӗн йавалантарма тытанчӗ. Ҫав вахатра Ваҫҫук тепӗр мӗлкине хаваласа тытса ик аллине каялла ҫыхса хучӗ.

Шай-шай сасса илтсенех Петюк та ыйхинчен варанса пиччӗш патне чупса ҫитрӗ.

Унтан вӗсем кашкар пек икӗ вара-хураха ялсовет канцелярине илсе кайрӗҫ.

---

# ХЁВЕЛ

(ХАЛЛАП)

Пĕр колхозник пурăннă. Унăн виçĕ ывăл пулнă.

Пĕрре ашшĕ ывăлĕсене хăй патне чĕнет те çапла калать:

— Ну, ачамсем,—тет,—сирĕнтен хăшĕ те хăшĕ çут хĕвел патне малтан çитсе килĕ—манăн пиллĕхĕм çавна пулĕ,—тет.

Ывăлĕсем шухăша каяççĕ. Епле çитсе килĕн-ха ара никам çитсе курман хĕвел патне?

Шухăшласан, шухăшласан, аслă ывăлĕ калать:

— Çутă хĕвел сенкер пĕлĕт тӳпинче йăлкăшать. Эп ун патне самолетпала çитсе килетĕп,—тет.

Вăталăххи калать:

— Çутă хĕвел аслă тинĕсрен тухать, аслă тинĕсе анса ларать. Эпĕ ун патнелле хурçă караппала çитĕп,—тет.

Кĕçĕнни калать:

—Çутă хĕвел пĕлĕтпе çĕр сыпăннă вырăнтанах тухать. Эп ун патне колхоз урхамахĕ çине утлансах та вĕçтерсе çитĕп,—тет.

Çапла каларĕç те старикĕн ывăлĕсем, виççĕшĕ виçĕ çĕрелле тухса кайрĕç: асли—самолетпа вĕçме, вăталăххи карапа ишме, кĕçĕнни—колхоз урхамахĕпе ыткăнма.

Унччен пулчĕ-и, кунччен пулчĕ-и, вăхăт пайтах иртрĕ, колхозникăн ывăлĕсем пайтах çӳрерĕç çут хĕвел патне çитсе килме ĕмĕтленсе. Асли кăвак пĕлĕт çинче ăмăрт кайăк пек вĕçме вĕренчĕ, вăталăххи—хăйĕн хурçă карапĕпе акăш-макăш тăвăлсемпе урăм-сурăм хумсене парăнтаракан пулчĕ, кĕçĕнни, Энтри ятли, хура урхамахне утланса, шавах хĕвел тухăçнелле ыткăнчĕ.

Халлап суять пуль те, анчах ĕçĕ чăн пулнă. Асли, ашшĕн пиллĕхне илме ĕмĕтленсе, виççĕмĕш пĕлĕт тӳпине тухсан, ăна темĕнле вут кайăк тĕл пулать те, чĕлхине кăларса çапла ыйтать:

— Ăста каятăн эс, Иван тус, шухă çунатсем çинче ярăнса?—тет.

— Çутă хĕвел патне çитсе килес теп, аттен пиллĕхне илме тивĕç пулас теп,—тавăрать Иван.

—Апла пулсан санӑн ҫиччӗмӗш пӗлӗт тӳпине тухас пулать, вара хӗвел патне ҫитмелли тупсӑм хӑех сан патна килӗ,—канаш парать кӑна вут-кайӑк. Иван итлет, ҫиччӗмӗш пӗлӗт тӳпине шӑтарса тухать, ҫӳлте тем пысӑкӗш хӗвел йӑлкӑшнине курать, унтан ниҫта ларса канмасӑр виҫӗ хутчен ҫӗр чӑмӑрӗ тавра вӗҫсе каҫать те, калла таврӑнать.

Вӑталӑхӗ, Петӗр, тинӗс тӑрӑх шӑп хӗвел тухакан вырӑна ҫывхарса пынӑ чух, хӗвел ҫулне ҫунатлӑ шыв ҫӗленӗсем пӳлсе хунине курать. Ҫӗленсем наркӑмӑшлӑ сӑннисене кӑларнӑ та, пур те карап еннелле чӑшкӑрса килеҫҫӗ. Петӗр хӑйӗн караппе тӳрех вӗсем ҫине тытрӗ. Ҫӗленсем ӑна пур енчен те сырса илчӗҫ, тинӗсе пӑтратма, хӳрисемпе ҫапса хурҫӑ карапа тайкалама тытӑнчӗҫ. Хаяр кӗрешӳ пуҫланса кайрӗ. Ҫапӑҫсан-ҫапӑҫсан ҫӗленсен вӑйӗсем пӗтсе ҫитрӗҫ, Петӗр вӗсене хӑйӗн хурҫӑ карапӗ айне вӑтӑрса тӑкрӗ. Вара Петӗр умне тем пысӑкӗш ҫутӑ хӗвел йӑлкӑшса тухрӗ.

Кӗҫӗнни, Энтри ятли, хӑйӗн хура урхамахӗпе пӗлӗтпе ҫӗр сыпӑннӑ вырӑнах ҫитрӗ. Кунта ӑна хӗрлӗ ҫӑлтӑрлӑ этемсем тӗл пулчӗҫ.

— Ăçталла çул тытан, Энтри тус?— тесе ыйтаççĕ.

— Çут хĕвел патне çитсе килес теп, аттен пиллĕхне илме тивĕç пулас теп,— ответлет Энтри вĕсене хирĕç.

— Эпир çав хĕвеле сыхласа пурăнатпăр. Ун патне çитсе курас килет пулсан, эс пирĕнпе пĕрле пул, ăна хупăрлакан хура пĕлĕтсене пирĕнпе пĕрлех хăваласа яр. Вара хĕвел санăн умна хăех йăлкăшса тухĕ,—теççĕ лешсем. Энтри килĕшрĕ, çăлтăрлă çынсемпе пĕрле хĕвелĕн çулне сыхлама тытăнчĕ.

Нумай иртрĕ-и, сахал иртрĕ-и вăхăт,— ун çинчен халлап шарламасть,—виçĕ тăван ашшĕ патне таврăнчĕç. Виççĕшин те кăкрисем çинче çап-çутă ылттăн çăлтăрсем çунса тăраççĕ.

Ашшĕ ыйтать:

— Ну, ывăлăмсем, хăшĕ çитсе килтĕр çут хĕвел патне?—тет.

Асли калать:

— Эпĕ хурçă карап çине утланса çĕр тавра виçĕ хутчен çавăрăнтăм, çиччĕмĕш пĕлĕт тўпине шăтарса тухрăм, çут хĕвел тем пысăкĕш йăлкăшнине куртăм. Çавăншăн мана Сталин Кремĕле чĕнтерчĕ, кăкăр çине ылттăн çăлтăр çакса ячĕ,—тет.

Вăталăххи калать:



— Эп хамăн хурçă карапăмпа аслă тинĕсĕн чиккине çитрĕм, хĕвеле хупăрласа тăракан хаяр çĕленсене парăнтартăм, çут хĕвел тем пысăкĕш йăлкăшнине куртăм. Çавăншăн мана Сталин Кремĕле чĕнтерчĕ, кăкăрăм çине ылттăн çăлтăр çакса ячĕ,—тет.

Кĕçĕнни, Энтри ятли, калать:

— Эп колхоз урхамахĕпе пĕлĕтпе çĕр сыпăннă çĕре çитрĕм, хĕрлĕ çăлтăрлă çынсемпе пĕрле хĕвелĕн кун-çулне сыхласа пурăнтăм, ăна хупăрлакан хура пĕлĕтсене çапса салатрăм. Çавăншăн Сталин мана Кремĕле чĕнтерчĕ, кăкăрăм çине ылттăн çăлтăр çакса ячĕ,—тет.



Ашшĕ, ывăлĕсен сăмахне итлесе пĕтерчĕ те, çапла каларĕ:

— Питĕ шеп, ачамсем. Пуртĕ эсир аçун сăмахĕсене итлерĕр, хĕвеле шырарăр, ун пат-

не ҫитсе килтĕр. Анчах та пĕлĕтре йăл-кăшакан хĕвелтен те ҫутăрах ҫунса тăра-кан хĕвелĕмĕр пирĕн—Иосиф Сталин. Эсир ун парнине тивĕҫ пултăр пулсан, аҫун пил-лĕхне те ĕмĕрлĕхех тивĕҫ пултăр,—терĕ.

Халлап ҫӳрет ялсемпе хуласем тăрăх, старик пирĕн колхозра пурăнать, унăн ет-кер ывăлĕсем тăван государствон чиккисе-не сыхлаҫҫĕ.



## ТУПМАЛЛИ

Стр.

1. Чӗрӗп чӗппи хӑнаран таврӑнни . . . . . . . . 3
2. Икӗ шапа инкеке лекни . . . . . . . . . . . 6
3. Чӑпар чӑхпа унӑн чӗпписем . . . . . . . . . 8
4. Чарусӑр кушак ҫури . . . . . . . . . . . . . 10
6. Мӑтьӑк хӑлхаллӑ чӑхпала кукӑр хӳреллӗ ула кушак 13
5. Атӑпа калуш ҫӗрӗк ҫӑпатана пытарни . . . . . 16
7. Цербер . . . . . . . . . . . . . . . . . . 20
8. Хӗвел . . . . . . . . . . . . . . . . . . 25

Редактор Кузьма Чулкась

Подписано к печати 28/I—41. НТ 2392. Печатных листов 2. кол. зн. в п/л 17500
Заказ № 765. Тираж 6000 экз.

Типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР.
Город Чебоксары, Дом печати.

Цена 50 коп.

И Л Ь Я   Т У К Т А Ш

МАЛЕНЬКИЕ РАССКАЗЫ

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ 1941